Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

79 (7821) № ✻ Юн кун, 2010 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Çĕнĕ Правительствăна çирĕплетнĕ

Паллă ĕнтĕ, республика ертӳçи улшăннă май пĕтĕм Правительство отставкăна каять. Министрсем хăйсен унчченхи тивĕçĕсене пурнăçлаççĕ кăна. Ку вăл Президент Министрсен Кабинечĕн çĕнĕ йышне палăртиччен çапла. Сентябрĕн 17-мĕшĕнче вара Михаил Игнатьев Правительствăра пулса иртекен улшăнусене пĕлтернĕ.

Çапла вара ЧР пурлăх министрĕ пулма С.А. Енилинăна, ял хуçалăх министрĕ пулма С.В. Павлова, юстици министрĕ пулма Н.В. Прокопьевăна çирĕплетнĕ. Физкультурăпа спорт тата туризм, çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕсен тивĕçĕсене хальлĕхе С. Мельников тата А. Ермолаев пурнăçлаççĕ.

Конкурс

## Грант илме шанăç пур

Муркаш район администрацийĕ хăйсен ĕçне тытăнма хатĕрленекен пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсене бизнес йĕркелеме грант уйăрса парассипе иртерекен конкурса хутшăнма йыхравлать. Ун пирки район администрацийĕ 2010 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче 700 № йышăну тунă.

Конкурса хутшăнас текенсенчен заявкăсене 2010 çулхи сентябрĕн 16-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 15-мĕшĕччен çак адреспа йышăнаççĕ: ЧР, Муркаш районĕ, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 6-мĕш çурт, 3-мĕш хут, 314-мĕш кабинет, райадминистрацин экономика пайĕ. Тел.: 8-(835-41) 63-2-45. Электронлă почта адресĕ: econom@morgau.ru.

Ĕç кунĕсенче 8 сехетрен тытăнса 17 сехетчен йышăнаççĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче

## Ĕçĕсемпе паллашма кăмăллă



*«Ударник» хуçалăхăн Панклири сĕт фермин коллективне пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ Лина Николаевна Трофимова (сăн ӳкерчĕкре) ертсе пырать. Хăйĕн ĕç ĕмĕрне ачаранах выльăх-чĕрлĕх отраслĕпе çыхăнтарнă хĕрарăм паян хăйне шанса панă участокра ответлăха туйнипе палăрса тăрать. Хăйĕн яваплăхĕпе ыттисемшĕн те тĕслĕх пулса тăрать. Шкул хыççăнах Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн Анаткассинчи сĕт ферминче дояркăра вăй хунăскер выльăхсене юратнипех Вăрнарти ял хуçалăх техникумне ветеринара вĕренме каять. Унтан вĕренсе тухнăранпа тенĕ пекех Лина Николаевна «Ударник» хуçалăхра. Юлашки çулсенче вăл Панклири сĕт фермине ертсе пырать. Ферма хĕле хатĕрпе пĕрех пулнине пĕлсен пурнăçне выльăх отраслне халалланă хĕрарăмăн ертӳçĕ пултарулăхĕ те уксахламанни сисĕнчĕ. Чăн-чăн ĕçченĕн çапла пулмалла та.*

*Авăн уйăхĕн 24-мĕшĕнче районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе çак отрасль аталанăвĕшĕн яваплă пулса тăракансем пĕрле пухăнса район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ ертсе пынипе сĕт фермисем хĕле епле хатĕрленнине пăхса тухĕç. Вĕсем кашни хуçалăхăн ферминчех пулса ĕçсене хак парĕç. Пĕтĕмлетӳ «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕнче иртĕ.*

**Анатолий БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Райадминистрацире

## Пултарулăхпа хастарлăхшăн

***Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕнчи 681 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе награтăлана***:

– **Станислав Владимирович ШИШКИНА**, «Оринино» хуçалăхăн тĕп участокĕн склад заведующине;

– **Галина Андреевна ИВАНОВĂНА**, «Оринино» хуçалăхăн диспетчерне.

Москакасси ял тăрăхĕн администрацийĕн ыйтăвне тивĕçтерсе çитĕнекен ăрăва вĕрентессипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн ачасен Муркашри искусство шкулĕн преподавательне **Ирина Васильевна ПЕТРОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Района тирпей-илем кĕртессипе

## Йывăç лартассипе уйăхлăх иртет

Чăваш Республикин Президенчĕн 2005 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче Йывăç кунне ирттерме йышăннине пурнăçласа районта çулленех анлă ĕçсем иртеççĕ.

Черетлĕ кĕр кунĕсем çитнĕ май сентябрĕн 14-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов авăн уйăхĕн 15 – юпа уйăхĕн 15-мĕшĕсенче районта йывăç лартассипе тата ялсене тирпей-илем кĕртессипе уйăхлăх ирттерме йышăну турĕ, ĕçсен планне çирĕплетрĕ. Уйăхлăхра эрозипе кĕрешес ыйту тĕп вырăнта. Çак тĕллевпе район администрацийĕн ял хуçалăх пайне вырăнсенчи ял тăрăхĕсемпе, ял хуçалăх предприятийĕсемпе тата организацийĕсемпе калаçса татăлса йывăç лартмалли вырăнсене палăртма тата мĕн чухлĕ лартмаллине пăхса хăварма хушнă.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен асăннă йышăнупа килĕшӳллĕн хăйсен территорийĕсенчи предприяти-организацисен ертӳçисемпе ялсемпе хăйсем вырнаçнă территорисене тирпей-илем кĕртме пĕрле ĕçлемелли пирки каланă. Ку ыйту вара кашни ял тăрăхĕнчех малти вырăнта.

Çут çанталăка сыхлассипе ĕçлекен специалист-эксперт Г. Симаков Ильинка лесничествипе пĕрле йывăç калчисемпе тивĕçтерессишĕн яваплă пулса тăраççĕ.

Мĕнех, уйăхлăха активлă хутшăнса йывăççем ытларах лартар, хамăр тăван ене хăтлăрах тăвар, тирпейлĕхе мала кăларар. Уйăхлăх ĕçĕ район хаçачĕн страницисенче курăнсах тăрĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Вулакансене пĕлме

## Кашкăрсенчен асăрханăр!

Авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче «Сурское» сунар хуçалăхĕн егерĕ кайăк кăвакалсене тытма сунара тухсан ирхи 5 сехет тĕлĕнче хăйĕн тавра ултă кашкăра асăрхать. Пурнăçшăн хăрушлăх сиксе тухнине кура ирĕк пуррипе çуккине пăхмасăрах сунарçă вĕсем еннелле икĕ хутчен пăшалтан перет: пĕр кашкăрĕ вырăнтах вилсе выртса юлать, тепри вара, аманнăскер, ыттисемпе пĕрле тарса çухалать. Çавăнпа кĕр кунĕсенче кăмпана çӳрекенсен те асăрханулăха малти вырăнта тытасчĕ.

**Хамăр инф.**

# Патшалăх пулăшăвĕ – кашни утăмра

Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене пĕлме

***Ял хуçалăхне патшалăх пулăшасси çине çитсен çакăн пек пĕтĕмлетӳрен пуçларĕ хамăрăн калаçăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Владимир Аркадьевич КАЛИНИН. Вăл калани пушă сăмах пулмасса шанса патшалăх пулăшăвĕ ял хуçалăхĕ тĕлĕшпе ăçтанăçтан палăрни пирки тĕплĕнрех сӳтсе явăрăмăр. Халĕ хамăр калаçăва вулакан умне кăларатпăр. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курассине анлăлатма камăн ĕçлĕ сĕнӳсем пур – сире валли те хаçат страницисенче вырăн пулĕ.***

**– Владимир Аркадьевич, патшалăх пулăшăвĕ ял хуçалăхĕ тĕлĕшпе кăçалхи шăрăх çанталăкпа çеç çыхăнман вĕт. Кунта пĕлтĕрхи пулăшу виçипе паллаштарни вырăнлă пулĕ.**

– Хаçат страницисенче ку ыйтăва хускатнишĕн сире пысăк тав. Район çыннишĕн те ку пысăк пĕлтерĕшлĕ. Патшалăх ял хуçалăхĕ çине алă сулчĕ текенсене тӳрех çапла калатăп: паянхи пурнăçра ĕçлекен çынна пулăшусăр хăварни çук. Патшалăх енчен пăхсан та çаплах пулса тухать.

Илер-ха обществăлла выльăх-чĕрлĕх отраслне. Сирĕн ыйту çине конкретлă хуравласа çакăн пек кăтартусемпе паллаштаратăп. Иртнĕ çул ăратлă ама выльăхсем пăхса усрама федераллă бюджетран пирĕн район 5236 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 1571 пин тенкĕ пулăшу укçи илме пултарчĕ. Ку пулăшупа майракаллă шултра выльăхсем тĕлĕшпе «Ударник» ăратлă выльăх завочĕ тата «Оринино», Суворов яч. хис. ăратлăхпа ĕçлекен репродукторсем, сыснасемпе илсен «Свобода» ăратлă выльăх завочĕпе «Герой» ăратлăхпа ĕçлекен репродуктор усă курчĕç. Çав вăхăтрах ăратлă выльăхсем туянма та республика бюджетĕнчен 636 пин тенкĕ уйăрнăччĕ. Унпа пирĕн хуçалăхсем ăратлă сыснасем туянма çеç усă курчĕç.

Ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентернĕ çĕрте ăратлă вăкăрсен вăрлăхĕпе усă курма пĕлтĕр пирĕн район федераллă бюджетран 172 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 372 пин тенкĕ субсиди илнĕччĕ. Унпа усă курма 12 хуçалăх расчетсем тăратнăччĕ. Вĕсене ун чухне ăратлă выльăх вăрлăхĕшĕн 100 процентĕпех субсиди тивĕçрĕ.

«Моргаушская» чăхчĕп фабрики» уçă акционерлă общество та иртнĕ çул ăратлă чăхсен çăмартисене тата талăкри ăратлă чĕпсене туянма 318 пин тенкĕ патшалăх пулăшăвĕпе усă курма пултарчĕ.

(Вĕçĕ 5 стр.)

Саламлатпăр



Пирĕн юратнă çыннăмăра – Отарккă ялĕнче пурăнакан **Семен Лазаревич ИВАНОВА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Пурнăçра сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăй-хăвату иксĕлми, сывлăху çирĕп пултăр. Хуйхă-суйхăпа инкек-синкек санран пăрăнса çӳреччĕр, телейĕ çумăнтан ан кайтăр. Ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр, сĕтелӳ çинчен çăкăр-тăвар ан таталтăр. Ырă ятна, сирĕн ĕçе тăсакансем савăнтарса тăччăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр. Ăшă кăмăлупа тараватлăхшăн тав тăватпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн – пысăк телей.

**Ырă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе хĕрĕсем çемйисемпе, çывăх тăванĕсем.**



Пирĕншĕн чи хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, кукамая – Елшик ялĕнче пурăнакан **Августина Павловна ЗУБКОВĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, канлĕ ватлăх сунатпăр сана, хаклă аннемĕр.

**Саламлаканĕсем: икĕ хĕрĕ, ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.**

**Килти хушма хуçалăх**

# Кил картинчи кайăк кăвакалсем

***Муркаш ялĕнче пурăнакан Лазарь Лукиянович Когуркина хăйĕн килти хуçалăхĕнчен инçех мар вырнаçнă пĕве хĕрринче тĕл пултăм. Калаçса кайрăмăр. Тĕрĕссипе унпа унччене тĕл пулса калаçас шухăш пулнăччĕ. Муркашри «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче хуралта ĕçлекенскер 20 çул ытла ĕнтĕ индокăвакалсем пăхса ӳстерет. Çитменнине тата вăл юлашки 15–16 çул килти хуçалăххрах кайăк кăвакалсем те пăхса усрать. Çапах та пирĕн калаçу индокăвакалсемпе кайăк кăвакалсем пирки мар, ачалăх çулĕсенчен пуçланчĕ.***





– Шкула кайма тытăниччченех манăн кăвакалсем патне туртăну пысăк пулнă. Килти хуçалăхра вĕсене çитĕнтерес килетчĕ,– аса илет Лазарь Лукиянович.– Хам пĕчĕкрех пулнăран пулас аннем вĕсене туянса пама тăхтаса тăчĕ. Кайран вара шкула кайма тытăнсан ĕсĕклесе ыйтсах аннене пасарта пĕр мăшăр кăвакал амипе аçине туянтартăм. Тинех çапла вара манăн тахçанхи ĕмĕт пурнăçланчĕ.

Пĕчĕк Лазарь шкултан килнĕ-килменех хăйĕн кăвакалĕсем патне васканă. Вĕсене курăк çитерме те çывăхри Макар уйне пĕччченех çӳренĕ. Пĕвере вĕсем епле ишнине курса та савăннă. Вăхăт иртнĕ май кăвакалсен йышĕ те хушăнсах пынă.

20 çул каялла вара Лазарь Когуркин хăйĕн хуçалăхĕнче индокăвакалсем усрама пуçлать. Ку çапла пулса тухнă. Муркашрах пурăнакан Димитрий Иванович Паладьев ăна 20 пуç индокăвакал чĕппи илсе килсе парать. Унччен ăна ку тăрăхра килти хуçалăхра никамах та усраса кайман. Çавăнпа та вăл пурăннă çĕртен Муркаш пасарĕн вырăнĕ инçех пулман пирки кунта килекенсем çырма хĕррине анса ку епле кайăксем-ха тесе тĕлĕнекенсем сахал мар пулнă: хăяматсем шывра та чиперех ишсе çӳреççĕ, шыври йывăç вулли-туратти çине те улăхса лараççĕ.

– Индокăвакалсем малтан манăн хурисем те, улисем те, шуррисем те пурччĕ. Эпĕ вĕсене çултан-çул шуррисене уйăрса хăварса усраса пытăм. Халĕ вĕсем пурте шуррисем кăна,– каласа парать кăвакал ӳстерекен ăста.

Лазарь Лукиянович шучĕпе килти хуçалăхра хур-кăвакал тавраш пăхса усрасси ытлашши йывăр ĕçех мар. Вĕсем валли апачĕ пултăр та шывĕ кирлĕ ĕнтĕ. Шыв пирки вара унăн пăлханма сăлтав çук. Хуçалăхпа юнашарах умлă-хыçлă пĕвесем пĕвеленĕ. Хур-кăвакал çу кунĕсенче кунта йышлă.

Ытларах чухне вăл хĕл каçарма 3 ама тата 2 аçа хăварать. Амасем çулталăкне икшер хут чĕпсем пусса кăлараççĕ. Индокăвакалсен шучĕ вара 50–60 пуçа та çитсе каять. Кашни амана пусса кăларма 19–21 çăмарта таран хурса парать вăл.

Паллах, килти хуçалăхра индокăвакалсем пăхса ӳстерни те ăстаçăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕнтĕ, çапах та мана ытларах вăл ирĕкре ӳсекен кайăк кăвакалсене килти хуçалăха «явăçтарни» интереслентернине ăнланса кун пирки çакна пĕлтерчĕ.

Пĕррехинче (ку вăл 16 çул каялла пулнă) Л.Л. Когуркин улăхра юхан шыв хĕрринче кайăк кăвакалăн ватса пĕтернĕ йăвине асăрхать. Кам пĕлет, те тилĕ тустарнă кăвакал ами пусма ларнă йăвана, те йытă травашĕ. Йăвинче вара 5 çăмарта чиперех сыхланса юлнă иккен. Ăстаçă çăмартасене пуçтарса килет те килĕнче тин кăна пусма ларнă индокăвакал айне хурса парать. Мĕн тетĕр, чĕпсем тăваттăшĕ чиперех тухаççĕ, тепри путланать. Шел, тепĕр чĕппине ула курак тытать. Виççĕшне вара чиперех упраса хăварса çитĕнтерме май килет.

Икĕ амапа пĕр аça çитĕнтерет вăл. Кайăк кăвакалсене Лазарь Лукиянович килте апат çитерет, шыв хĕррине вĕсем хăйсемех çӳреççĕ. Вăхăт çитсен кăвакал амисем пĕри хуçалăхăн склачĕ айĕнче, тепри пĕвери йывăçсем хушшинче йăва çавăрса чĕпсем пусса кăлараççĕ. Кăвакалсемпе чĕпписем валли килти хуçалăхра йăвасем ăсталаса парать.

Халĕ ĕнтĕ Л.Л. Когуркин хуçалăхĕнче 24 кайăк кăвакал. Кăçал валли вăл 3 ама хăварнă пулнă. Алла хăнăхтарнă тейĕн, çынран шикленме шутламаççĕ. Е сывлăша вĕçсе хăпараççĕ те куçран çухалаççĕ, хырăм выççан вара каллех хăйсен хуçи патне таврăнаççĕ.

– Ăçта хĕл каçаççĕ вара сирĕн кăвакалсем, кăнтăрах вĕçсе каймаççĕ пуль те?– ыйтатăп кил хуçинчен.

Лазарь Лукиянович вĕсене килти витере хĕл каçарать иккен. Вĕçсе каясран вара кĕрхи кунсем çитсен çунаттисене касса ярать.

– Кăçал кăвакалсен çунаттисене ниепле те касма май килмерĕ. Те вăхăчĕ пулмарĕ темелле. Халĕ ытлашши патнех пыртарасшăн мар. Çапах та апат парсан тетелпе те пулин вĕсене тытса çунаттисене касмах тивет. Унсăрăн вĕсем ирĕкре çапах та пурăнаймаççĕ пулĕ. Çынран ытлашши шикленмен пирки вĕсене е сунарçăсем тытса пĕтерĕç, кăнтăра та вĕçсе çитейрес çук пулĕ вĕсем,– хăйĕн шухăшне пĕлтерет Лазарь Когуркин.– Ун пек инçĕшне вĕçме хăнăхман вĕсем, хăйсем тĕллĕн апат тупса çиесси те вĕсемшĕн çăмăл мар.

– Усранинчен усламĕ пур-и вара?– ыйтатăп унран.

– Усламшăн усрамастăп,– тӳррĕн хуравлать вăл.– Чун туртнипе аппаланатăп кайăк кăвакалсемпе. Çăмартаран тухсанах чĕпсене ачана пăхнă пекех пăхма тивет. Аптекăран ятарлă апат та туянатăп. Калăпăр пĕр кăвакалран 800 грамм аш тухнине нумай теймĕн. Хам пăхса çитĕнтернĕскерсене вара пусма та питĕ шел. Тĕрĕссипе çак 16 çул хушшинче кушак е йытă тытнисĕр пуçне хăй вилĕмĕпе кăвакал е унăн чĕппи вилнĕ тĕслĕх пачах та пулман.

Хамăр калаçу вĕçĕнче Лазарь Лукиянович тепĕр интереслĕ саманта та аса илчĕ. Унăн алла хăнăхтарнă кайăк кăвакал амисене çуркуннехи сунар кунĕсенче кăвакал аçисене астарса тытма илсе кайкалакан сунарçăсем те пулкаланă. Пĕррехинче Чемей çыннине парса ярать кăвакал амине вăл. Лешĕ вара ăнсăртран ăна сунарта персе вĕлерет. Кăвакала пусса тирпейленĕ чухне çăмарта тухать. Ăна ăстаçă инкубатора вырнаçтарса хурать, чиперех чĕпĕ кăларать.

– Пĕтĕмпех чун туртнипе. Чун туртнипе ĕçлесен, шанăç, ĕненӳ, ăнтăлу пулсан вăхăт иртни те сисĕнмест, юратнă ĕç те савăнăç кăна кӳрет,– терĕ юлашкинчен пĕвере ишсе çӳрекен хăйĕн кăвакалĕсем çине ытарайми пăхса Лазарь Лукиянович.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: ытларах чухне пушă вăхăтне пĕве хĕрринче ирттерет Л.Л. Когуркин; епле-ха вĕсем çине пăхса киленмĕн?**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**ВЫПИСКА ИЗ РЕШЕНИЯ**
**11 сентября 2010 года № 85/2**
**О назначении председателей участковых избирательных комиссий по выборам в органы местного самоуправления**

В соответствии с пунктом 7 статьи 28 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила:**

29. Назначить председателем участковой избирательной комиссии Тораевского избирательного участка №29 Ухварину Татьяну Ипполитовну, 13.01.1967 года рождения, заведующего Тораевской участковой ветлечебницы ГУ «Моргаушская РСББЖ» Госветслужбы Чувашии, выдвинутую собранием избирателей, образование – высшее.

30. Назначить председателем участковой избирательной комиссии Большетокшикского избирательного участка №30 Васильева Бориса Николаевича 25.05.1961 года рождения, мебельщика ООО «Декор», выдвинуого собранием избирателей, образование – высшее.

31. Назначить председателем участковой избирательной комиссии Сюткюльского избирательного участка №31 Николаеву Майю Михайловну, 02.05.1965 года рождения, рабочую ООО «ДаАн», выдвинутую Моргаушским районным местным отделением Партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ», образование– среднее.

33. Назначить председателем участковой избирательной комиссии Тойшевского избирательного участка №33 Яковлеву Надежду Николаевну, 07.04.1970 года рождения, фельдшера Тойшевского ФАП МУЗ «Моргаушская ЦРБ», выдвинутую собранием избирателей, образование – средне-специальное.

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**ВЫПИСКА ИЗ РЕШЕНИЯ**
**11 сентября 2010 года № 85/1**
**О формировании участковых избирательных комиссий избирательных участков №1-52 по выборам в органы местного самоуправления Моргаушского района**

В соответствии со статьями 22, 27 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 15 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления», решением территориальной избирательной комиссии от 23 августа 2010 года № 77/4 «О количественном составе участковых избирательных комиссий по выборам в органы местного самоуправления Моргаушского района, рассмотрев представленные предложения по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила:**

1.Сформировать участковые избирательные комиссии избирательных участков №1-52 в следующем составе:

| | | |
|---|---|---|
| Москакасинского избирательного участка № 18 | | |
| 1. | Горбунов Петр Николаевич | 01.06.1986 года рождения, временно не работает, выдвинут собранием избирателей, образование – незаконченное высшее; |
| 2. | Ильин Олег Аристархович | 28.07.1971 года рождения, временно не работает, выдвинут собранием избирателей, образование – среднее; |
| 3. | Петров Сергей Витальевич | 24.02.1970 года рождения, временно не работает, выдвинут собранием избирателей, образование – средне-специальное; |
| 4. | Поркин Геннадий Александрович | 13.04.1968 года рождения, временно не работает, выдвинут собранием избирателей, образование – среднее; |
| 5. | Степанова Мария Андреевна | 26.02.1973 года рождения, Москакасинское почтовое отделение Моргаушского почтамта УФПС ЧР филиала ФГУ "Почта России», начальник, выдвинута собранием избирателей, образование -высшее; |
| 6. | Федорова Зоя Павловна | 11.02.1955 года рождения, пенсионер, выдвинута Моргаушским районным местным отделением Партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ», образование – средне-специальное; |
| 7. | Шалтынова Галина Фадеевна | 04.04.1954 года рождения, пенсионер, выдвинута собранием избирателей, образование – среднее. |
| Орининского избирательного участка № 21 | | |
| 1. | Викторов Александр Корнилович | 02.12.1966 года рождения, временно не работает, выдвинут бюро Моргаушского районного комитета "Коммунистическая партия Российской Федерации", образование –среднее общее; |
| 2. | Григорьева Наталья Игоревна | 05.12.1988 года рождения, МУЗ «Моргаушская ЦРБ», медицинский регистратор, выдвинута собранием избирателей, образование – средне-специальное; |
| 3. | Дмитриев Владимир Николаевич | 05.04.1974 года рождения, филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО Чувашсетьгаз», водитель, выдвинут собранием избирателей, образование – среднее общее; |
| 4. | Налимова Оксана Юрьевна | 12.12.1980 года рождения, СПК «Оринино», главный бухгалтер, выдвинута Моргаушским районным местным отделением Партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ», образование - средне-специальное; |
| 5. | Павлова Елена Святославовна | 19.05.1981 года рождения, СПК «Оринино», бухгалтер, выдвинута собранием избирателей, образование – средне-специальное. |
| Анаткасинский избирательного участка № 32 | | |
| 1. | Архипова Наталия Николаевна | 12.07.1979 года рождения, временно не работает, выдвинута собранием избирателей, образование – высшее; |
| 2. | Важорова Лидия Ивановна | 04.02.1975 года рождения, ООО «ДаАн», рабочий, выдвинута собранием избирателей, образование – средне-специальное; |
| 3. | Васильева Галина Валерьяновна | 26.05.1972 года рождения, страховой отдел в с.Моргауши филиала ООО «Росгосстрах» в ЧР-Чувашии, страховой агент, выдвинута Моргаушским районным местным отделением Партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ», образование – среднее; |
| 4. | Клементьева Ольга Германовна | 11.06.1974 года рождения, ГУ «Моргаушская РСББЖ» Госветслужбы Чувашии, Тораевская ветеринарная лечебница, ветфельдшер, выдвинута собранием избирателей, образование – средне-специальное; |
| 5. | Кузеева Светлана Геннадьевна | 17.12.1973 года рождения, ГУ «Моргаушская РСББЖ» Госветслужбы Чувашии, Тораевская ветеринарная лечебница, ветфельдшер, выдвинута собранием избирателей, образование – среднее специальное. |
| 6. | Кузнецов Радонеж Виссарионович | 23.11.1953 года рождения, СХПК им. Суворова, заведующий складом, выдвинута собранием избирателей, образование – среднее. |

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**17 сентября 2010 года**
**№ 87/2**
**Об аннулировании регистрации Кудряшова Виссариона Михайловича, кандидата на должность главы Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

В соответствии с п.30 статьи 38 Федерального закона от 12.06.2002 г. №67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», на основании заявления от 14 сентября 2010 года, поступившего от зарегистрированного кандидата на должность главы Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Кудряшова Виссариона Михайловича Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила**:

1. Аннулировать регистрацию Кудряшова Виссариона Михайловича, 1962 года рождения, проживающего в д.Апчары Моргаушского района Чувашской Республики, охранника ООО «Хлебороб», выдвинутого в порядке самовыдвижения кандидатом на должность главы администрации Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, 30 августа 2010 года, 17 часов 30 минут.

2. Удостоверение кандидата на должность главы Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики считать недействительным.

3. Опубликовать настоящее решение в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**17 сентября 2010 года**
**№ 87/1**
**Об аннулировании регистрации Гусева Владислава Вячеславовича, кандидата на должность главы Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

В соответствии с п.30 статьи 38 Федерального закона от 12.06.2002 г. №67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», на основании заявления от 14 сентября 2010 года, поступившего от зарегистрированного кандидата на должность главы Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Гусева Владислава Вячеславовича Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила**:

1. Аннулировать регистрацию Гусева Владислава Вячеславовича, 1964 года рождения, проживающего в д.Кюрегаси Моргаушского района Чувашской Республики, временно не работающего, выдвинутого в порядке самовыдвижения кандидатом на должность главы администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, 30 августа 2010 года, 17 часов 25 минут.

2. Удостоверение кандидата на должность главы Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики считать недействительным.

3. Опубликовать настоящее решение в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**17 сентября 2010 года № 87/3**
**Об аннулировании регистрации Григорьева Станислава Порфирьевича, кандидата в депутаты Моргаушского районного Собрания депутатов Чувашской Республики пятого созыва по Рыкакасинскому одномандатному избирательному округу № 12**

В соответствии с п.30 статьи 38 Федерального закона от 12.06.2002 г. №67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», на основании заявления от 15 сентября 2010 года, поступившего от зарегистрированного кандидата в депутаты Моргаушского районного Собрания депутатов Чувашской Республики пятого созыва по Рыкакасинскому одномандатному избирательному округу № 12 Григорьева Станислава Порфирьевича, Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила**:

1. Аннулировать регистрацию Григорьева Станислава Порфирьевича, 1961 года рождения, проживающего в д.Сидуккасы Моргаушского района Чувашской Республики, директора Республиканского государственного образовательного учреждения начального профессионального образования «Профессиональное училище № 27 п.Кугеси», выдвинутого в порядке самовыдвижения кандидатом в депутаты Моргаушского районного Собрания депутатов Чувашской Республики пятого созыва по Рыкакасинскому одномандатному избирательному округу № 12, 30 августа 2010 года, 16 часов 00 минут.

2. Удостоверение кандидата в депутаты Моргаушского районного Собрания депутатов Чувашской Республики пятого созыва по Рыкакасинскому одномандатному избирательному округу Григорьева Станислава Порфирьевича № 12 считать недействительным.

3. Опубликовать настоящее решение в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**17 сентября 2010 года**
**№ 87/4**
**Об аннулировании регистрации Мочалова Леонида Ивановича, кандидата в депутаты Моргаушского районного Собрания депутатов Чувашской Республики пятого созыва по Рыкакасинскому одномандатному избирательному округу № 12**

В соответствии с п.30 статьи 38 Федерального закона от 12.06.2002 г. №67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», на основании заявления от 15 сентября 2010 года, поступившего от зарегистрированного кандидата в депутаты Моргаушского районного Собрания депутатов Чувашской Республики пятого созыва по Рыкакасинскому одномандатному избирательному округу № 12 Мочалова Леонида Ивановича, Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила**:

1. Аннулировать регистрацию Мочалова Леонида Ивановича, 1961 года рождения, проживающего в д.Малый Сундырь Чебоксарского района Чувашской Республики, директора МОУ «Калайкасинская СОШ им.А.Г. Николаева», выдвинутого в порядке самовыдвижения кандидатом в депутаты Моргаушского районного Собрания депутатов Чувашской Республики пятого созыва по Рыкакасинскому одномандатному избирательному округу № 12, 30 августа 2010 года, 16 часов 25 минут.

2. Удостоверение кандидата в депутаты Моргаушского районного Собрания депутатов Чувашской Республики пятого созыва по Рыкакасинскому одномандатному избирательному округу № 12 Мочалова Леонида Ивановича считать недействительным.

3. Опубликовать настоящее решение в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

# Патшалăх пулăшăвĕ – кашни утăмра

**Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене пĕлме**

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.)**

Пысăк продуктивлă ĕнесене тытса тăма та патшалăх пулăшусăр хăвармасть. 2009 çулта çакна валли республика бюджетĕнчен района 3872 пин тенкĕ укçа килсе çитрĕ. Субсиди ставкисем çапларах пулнăччĕ: пĕр ĕне пуçне 2008 çулта 3700-4500 килограмм сĕт сунă пулсан, çав ĕнешĕн 3100 тенкĕ, 4500 килограмран ытларах сĕт антарнă ĕнешĕн – 4200 тенкĕ. Субсидисем ун чух пирĕн районтан «Герой», Ильич яч. хис., «Оринино», Суворов яч. хис. хуçалăхсем çулталăкĕпех илчĕç пулсан, «Ударник» хуçалăх – 2 уйăх, Чкалов яч. хис. хуçалăх – пĕр уйăх.

Выльăх-чĕрлĕх отрасльне патшалăх пулăшнине пĕтĕмлетсен пĕлтĕр пирĕн район кăна тĕрлĕ бюджетсенчен 14110 пин тенкĕ субсиди илнĕ.

**– Ăратлă выльăхпа ĕçленин усси пур. Анчах çав вăхăтрах ӳсен-тăран отраслĕ çине патшалăх еплерех пăхнипе те паллашас килет. Кунта пулăшу мĕнле вырăнта тăрать?**

– Выльăх-чĕрлĕхпе ӳсен-тăран отраслĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура. Çавăнпа та пĕрне пулăшнă вăхăтра теприне манса хăварнипе май килмест. Патшалăх та çак çыхăнăва çирĕп алăра тытса пырать. Ӳсен-тăран отраслĕнче элитăллă вăрлăх туянса тăкак тӳснĕшĕн пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсене патшалăх пĕлтĕр пĕтĕмпе 1755 пин тенкĕ (республика бюджетĕнчен – 1112 пин тенкĕ, федераллă бюджетран – 643 пин тенкĕ) субсиди куçарса пачĕ.

Ӳсен-тăрансене хӳтĕлеме каякан тăкаксен 30 процентне патшалăх саплаштарчĕ. Ку сумма пĕлтĕр районĕпе 1606 пин тенкĕпе танлашрĕ.

Уй-хирте ĕçлекенсене минераллă удобренисем туянма кайнă тăкаксен пĕр пайне саплаштарассине те патшалăх хăй çине илнĕччĕ. Çапла вара района 12052 пин тенкĕ патшалăх пулăшăвĕ килсе çитрĕ.

Çĕр ĕçченĕ çĕр пулăхлăхне ӳстерессипе ĕçленине те патшалăх палăртмасăр хăвармасть. Иртнĕ çул кунта тӳснĕ тăкаксене пĕтĕмпе 4372 пин тенкĕ саплаштарнă. Çак пулăшупа «Свобода», «Герой», Ильич яч. хис., Е. Андреев яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе С. Сретинский хресчен (фермер) хуçалăхĕ 80 процент чухлĕ усă курчĕç. Тӳлев ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлайман 10 хуçалăх вара тăкаксене 50 процент кăна саплаштарма мехел çитерчĕ.

**– Пĕтĕмлетсе пăхсан патшалăх пулăшăвĕн виçин калăпăшĕ самай пысăк пулса тухать.**

– Çапла. Патшалăх пулăшăвĕн пĕтĕмĕшле виçи 2009 çулта 33895 пин тенкĕне çитрĕ. Çакна çеç калатăп. Вăл пулăшу кăçал та пĕчĕк пулмĕ. Унпа çанă тавăрса ĕçлекен çеç туллин усă курма пултарни те паян вăрттăнлăхра тăмасть.

**– Килĕшетĕп. Хальлĕхе кăçалхи кăрлач – çурла уйăхĕсенче килсе çитнĕ патшалăх пулăшăвĕн виçи паллă ĕнтĕ. Мĕн чухлĕ пулчĕ вăл? Тата камсем унпа çителĕклĕ усă курма пултарчĕç?**

– Субсидисем памаллин йĕрки çавăн пекех: унчченхи çулхинчен тухăçлăрах ĕçлетĕн – патшалăх пулăшăвĕпе усă куратăн. Çак пулăшупа тĕллевлĕ усă курас текенсен йышĕ хушăнсах пырать. Ĕçлекенсем кашниех унпа туллинрех усă курма тăрăшаççĕ. Кăçалхи январь – август уйăхĕсенче районти хуçалăхсем ăратлă ама выльăхсене пăхса тăма федераллă бюджетран 4755 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 277 пин тенкĕ илме пултарчĕç. Кунпа пĕрлех ăратлă выльăхсем туянма та района çак тапхăрта 166,8 пин тенкĕ килсе çитрĕ, мĕншĕн тесен Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., «Восток», «Оринино» хуçалăхсем Е. Андреев яч. хис., «Свобода», «Герой» хуçалăхсенчен ăратлă сысна çурисем туянчĕç.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» усă акционерлă общество та ăратлăхпа тăтăш ĕçлесе пырать. Çапла вара кăçал кăна патшалăх пулăшăвĕпе кунта 423,9 пин тенкĕлĕх усă курчĕç.

Çĕр ĕçченне пысăк продуктивлă ĕнесене тытса тăма та патшалăх пулăшусăр хăвармарĕ. Çакна валли республика бюджетĕнчен района 4206 пин тенкĕ укçа килсе çитрĕ. Субсиди ставкисем çапларах пулчĕç: пĕр ĕне пуçне 2009 çулта 3900-4500 килограмм сĕт сунă пулсан, çав ĕнешĕн 3100 тенкĕ, 4500 килограмран ытларах сĕт антарнă ĕнешĕн – 4200 тенкĕ. Сакăр уйăх кăтартăвĕсемпе субсидисем илме пирĕн районтан çак хуçалăхсем тивĕç пулчĕç: «Герой», «Ударник», Ильич яч. хис., «Оринино», Суворов яч. хис., «Свобода», Чкалов яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе А. Мерлов тата И. Чернова хресчен (фермер) хуçалăхĕсем.

Пĕтĕмлетсе пăхсан кăçалхи сакăр уйăхра пирĕн районти мал туртăмлă хуçалăхсем выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче патшалăх пулăшăвĕпе 9960,7 пин тенкĕлĕх усă курчĕç.

Ыранхи куна пăхса ĕçлекенсене патшалăх ӳсен-тăран культурисем туса илес ĕçре те айккине пăрахса хăвармарĕ. Пирĕн хуçалăхсем элитăллă вăрлăх туянма кăна пĕтĕмпе 2041 пин тенкĕлĕх пулăшу илчĕç. Ӳсен-тăрансене хӳтĕлемелли препаратсем валли хастар ĕçлекенсем валли 1927 пин тенкĕ пулăшу килсе çитрĕ.

Уй-хирте ĕçлекенсене минераллă удобренисем туянма кайнă тăкаксен пĕр пайне саплаштарассинче те патшалăх хăй суйласа илнĕ çултан пăрăнмарĕ. Ку енĕпе пирĕн районти хуçалăхсене патшалăх пулăшăвĕ 2829,4 пин тенкĕ пулчĕ.

Патшалăх çĕр пулăхлăхне ӳстерессипе ĕçленине те пулăшусăр хăвармасть. Сакăр уйăхра ку енĕпе (çĕрсене извеçлесси тата кали тăварĕ сапасси) района 3704,6 пин тенкĕ килсе çитрĕ.

Çапла вара çĕр ĕçченĕ уй-хирте тӳснĕ тăкаксене пĕтĕмпе 10502 пин тенкĕ саплаштарнă.

**– Куратпăр ĕнтĕ, мал туртăмлă ĕçлекеншĕн кашни утăмрах патшалăх пулăшăвĕ пурри курăнать. Апла пулсан çăмăл мар ĕçре эпир пĕччен мар.**

– Çапла. Çак пулăшупа анлăрах усă курасси – пирĕн хуçалăхсем умĕнче тăракан тĕп тĕллев. Çитес калаçура кăçалхи шăрăхра патшалăх ял хуçалăхне епле пулăшу пани пирки сăмах пуçарăпăр.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Ĕç тăвакан уголовлă инспекцире**

# Кукăр çул ан илĕрттĕр



***Ю.Н. Блинов Шупашкар хулинче çуралнă. Шкул пĕтерсен Мускав хулинче Мускаври кооперации университечĕн юридици институтĕнчен куçăмлă майпа вĕренсе тухнă. 2005 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа 2008 çулхи май уйăхĕччен Лапсар поселокĕнчи 1 № юсану колонийĕнче вăй хунă, кайран – Шупашкарти 4 № колонире***

***Преступлени тунăшăн явап тĕрлĕрен пулма пултарать. Çакна саккунпа палăртнă. Условлă майпа айăпланисем, сăмахран, палăртнă наказание епле пурнăçланине ĕç тăвакан уголовлă инспекци тĕрĕслесе тăрать.***

***Айăпланисен асăннă категорийĕпе кăçалхи май уйăхĕнчен пуçласа районсем хушшинчи Муркашри 11 № ĕç тăвакан уголовлă инспекцийĕнче Юрий Николаевич БЛИНОВ аслă инспектор ĕçлеме тытăнчĕ. Условлă майпа айăпланисемпе ĕçлесси мĕнле пулса пырать-ха районта? Çак ыйту тавра пулчĕ пирĕн калаçу.***

**– Юрий Николаевич, сирĕн ĕç биографийĕпе паллашнă май çакна ыйтас килет: юсану колонийĕнче тата ĕç тăвакан уголовлă инспекцире айăпланă çынсемпе ĕçлессин уйрăмлăхĕсем пур-и?**

– Уйрăмлăхĕсем сахал мар, анчах та тĕп уйрăмлăхĕ кăмăл-туйăмпа çыхăннă темелле. Паллах, колонисенчи лару-тăру пусăрăнтарать. Çирĕп дисциплина вара айăпланнисемпе ĕçленĕ чух пур çĕрте те кирлĕ.

**– Иртнĕ тулли сакăр уйăха илес пулсан сирĕн инспекцире условлă майпа айăпланисем учетра чылай-и?**

– Çулталăк пуçланнăранпа август уйăхĕ вĕçĕччен пирĕн ĕç тăвакан уголовлă инспекцире 164 çын судпа çирĕплетнĕ наказанисене пурнăçлассипе учетра пулчĕ. Асăннă тапхăр вĕçне – 61 çын. Вĕсенчен 46-шĕ – условлă майпа айăпланисем.

**– Вĕсемпе ĕçленĕ чухне мĕнле ыйтусем çине тимлĕх ытларах уйăрма тивет?**

– Муркаш районĕнче рецидивлă преступленилĕх (малтанхи айплава пурнăçа кĕртнĕ тапхăртах тепĕр преступлени туни) чакманни пăшăрхантарать. Сăлтавĕсем вара пурнăç условийĕсемпе тачă çыхăннă. Рецидивистсем хушшинче ĕç вырăнĕсĕррисем чылай. Çавăнпа та вĕсен ĕç вырăнĕ, апла пулсан вăхăтра илсе тăракан ĕç укçи пулманни те рецидивлăха çул парать. Çак çитменлĕхе пула йăлари, çемьери преступленисем те ытларах пулаççĕ.

Суд йышăнăвĕпе юсанмалли ĕçсене явăçтарнисене, сăмахран, предприяти-организацисене вырнаçтарма та йывăртарах. Вĕсенче ахаль те штатсене чакарас тапхăр пырать. Пирĕн вара айăпланисене ĕç тупса памаллах. Çитменнине тата ĕçе вырнаçтарма кирлĕ документсене те туса памалла. Хăшĕсен вара пирĕн пата «çакланиччен» алăра пĕр документ та çук. Мĕншĕн тесен çакнашкаллисенчен чылайăшĕ эрех «айне пулнăскерсем».

Рецидивлă преступленисем нумайăи те çавăнпах çыхăннă ĕнтĕ. Акă сăмахран упăшки малтан арăмне хĕненĕ, кайран вара айăплава пурнăçа кĕртнĕ вăхăтрах тепĕр преступлени тăвать – ачине хĕнет. Çапла майпа наказание палăртнă тапхăр татах та вăрăмланать. Çакнашкал чухне ĕнтĕ эпир суда айăпланнисене хушма обязательствăсем пама ыйтатпăр. Шел пулин те судпа прокуратура йĕркене пăсакансене пур чухне те эпир ыйтнипе «тивĕçтермеççĕ».

**– Сирĕн шутпа рецидивлă преступленисене асăрхаттарассипе, вĕсене хирĕç кĕрешессипе мĕнлерех утăмсем туни пулăшма пултарĕччĕ-ши?**

– Условлă майпа айăпланă çыннăн ĕç вырăнĕ çук пулсан ăна ĕçпе тивĕçтерекен центра ярса вăхăтлăх е обществăлла ĕçе явăçтарни те пулăшма пултарĕччĕ. Алкоголе, наркотика пăхăнса пурăнакансене – обществăран уйăрманнисене – специализациленĕ сиплев учрежденийĕсене вырнаçтарсан усси ытларах пулмалла тесе шутлатăп. Çемьере, йăлара йĕркене пăснисемпе ĕçлеме психологсене явăçтарни те ытлашши пулмасть пулĕ. Тăванĕсемпе çемье членĕсене, тепĕр чух витĕмлĕ çынсене çак воспитани ĕçне явăçтарни те усă кӳме пултарĕччĕ. Пĕрмай йĕрке пăсакансене вара обществăран уйăрмаллах тесе шутлатăп. Паллах, ĕç тăвакан уголовлă инспекцисен – шалти ĕçсен пайĕпе, прокуратурăпа, судпа, вырăнти самоуправлени органĕсемпе çыхăнса ĕçлесе наказанисене пурнăçа кĕртекен тĕп координаторĕн – статусне ӳстермеллине саккун шайĕнче пăхса хурсан та аван пулмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

# Черетлĕ айăплав вуларĕç



***Паянхи пурнăçра саккун малти вырăна тухни яр уççăн курăнать. Пуçлăх е рядовой ĕçчен – саккун умĕнче пурте пĕр тан.***

**Суд залĕнчен**

Халĕ каланине авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче Муркаш район сучĕн Ильинка ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинче пурăнакан Н.С. Мухина айăпласа (хальлĕхе приговор вăя кĕмен-ха) ирттернĕ суд ларăвĕнче те курма май пулчĕ.

Н. Мухин саккуна пăсни вара çапла пулнă. 2009 çулхи авăн уйăхĕн 11-мĕшĕ. Вомпăкассинче хăйĕн тăванĕ Н.В. Майкова патĕнче стройка ĕçĕсенче пулăшнă чух каçхине хăйĕнпе пурăнакан Н. Соколова патне Шупашкара кайма хайхискер кил хуçи гаражĕнчен хăйĕнчен ыйтмасăр «Минск» мотоцикл илсе тухса каять. Кил хуçи çухату пирки тепĕр кунне тин асăрхать. Çакă Н. Мухин «ĕçĕ» пулма пултарасса вăл çийĕнчех ăнланса илет. Авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче милици ĕçченĕсенчен вăл хăйĕн тăванĕ ыйтмасăр «çаклатса» кайнă мотоциклпа Шупашкарта авари тунине пĕлет. Çав вăхăтрах Н. Мухин хăтланăшне пĕлнисем унăн водитель удостоверенийĕ çуккине те пĕлнĕ.

Çапла вара суд Н. Мухин хăтланăшне РФ УК 166 статйин 1-мĕш пайĕнче палăртнă пек вăрлас тĕллевсĕр мотоцикл «хуçи» пулса тăнă тесе пăхать. Çак айăплавпа «хастар каччăна» суд вунă пин тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăнчĕ.

Суд ĕçне пĕтĕмлетсе çакна каламалла. Кăçалхи 8 уйăхра кунта 65 уголовнăй ĕçе, 339 гражданла ĕçе тата административлă ĕçе пăхса тухнă. Кашнинпех тивĕçлĕ приговор кăларнă.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: район сучĕн председателĕ Э. Тарасова; айплав сăмахĕ прокурор заместителĕнче Ю. Семеновра; В. Сорокин адвокат саккуна пăсаканпа.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**





Спорт

## «Наци кросĕпе» пĕрлех – Олимп чемпионкин парнисемшĕн

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче районта пысăк спорт уявĕ иртет. Муркашри стадионта çăмăл атлетика енĕпе Олимп чемпионкин Валентина Егоровăн парнисене çĕнсе илессишĕн ăмăрту пулать. Унта ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен, ял тăрăхĕсен тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен командисем вăй виçеççĕ.

Çак ăмăртусемпе пĕрлех район шайĕнче Пĕтĕм Раççейри «Наци кросĕ – 2010» чупу та иртет. Сывă пурнăç йĕркине тата спорта аталантарас тĕллевпе массăллă чупу кунĕ 2003 çултанпа йăлана кĕме те ĕлкĕрчĕ. Апла хамăрăн сывлăха мала хурса спорт уявне пурин те хутшăнма тăрăшмалла.

Ăмăрту стадионта 11 сехетре пуçланать. Заявкăсене 10 сехет çурăччен çеç (!) йышăнаççĕ. Ĕç коллективĕсен командисенче участниксен шучĕ 3 хĕрарăмпа (1 км) 3 арçынтан (2 км) сахал пулмалла мар. Командăн пĕтĕмĕшле зачетне шăпах çакăн чухлĕ çыннăн чи лайăх кăтартăвĕсем тăрăх шутлаççĕ.

Шкул командисене уйрăммăн наградăлаççĕ. 1994-95 çулсенче çуралнă яшсем 3, хĕрсем 2 километр ăмăртаççĕ, 1996-1997 çулта çуралнисем пурте 2-шер километр, 1998 çулта çуралнисемпе кĕçĕнреххисем – 2 (арçын ачасем) тата 1 (хĕр ачасем) километрлă дистанцисенче тупăшаççĕ.

Старта тухакансене ăнăçу сунатпăр, спорта юратакансене 11 сехет тĕлне стадиона йыхравлатпăр.

**Хамăр инф.**

«Злата пальма» çу

# Хама хам пулăшма пултаратăп

Организм йĕркеллĕ ĕçлеме пăрахсан тата чирсен «çыххи» тупăнсан «Мĕн тумалла-ха?» текен ыйту çине шăпах çапла хуравламалла. Халĕ нумайăшĕ пĕлет ĕнтĕ: чирсем пуçланнин 85 проценчĕ тĕрĕс мар апатланнинче. Тĕрĕс мар апатланнипех пирĕн организм кашни органа, кашни клеткăна йĕркеллĕ ĕçлеттерекен элементсене: витаминсене, микроэлементсене, питĕ кирлĕ çу кислотисене – илсе çитерейместь.

Çак компонентсем пулсан организм хăех сывлăх çулĕ çине тăма пултарнине кашни ăслă-тăнлă çынах ăнланать. Çынна çут çанталăк панă вăй-хăват пĕтĕмпех чир-чĕре тата ватлăха хирĕç кĕрешме кайĕ.

Организма çак питĕ кирлĕ элементсем «Злата пальма» хĕрлĕ пальма çăвĕнче çителĕклех. Çак çĕнĕ йышши çу çут çанталăкри ӳсен-тăрансенчен хатĕрленĕ апат: консервантсемсĕр, сăрăсемсĕр, хими хутăшĕсемсĕр. Вăл пирĕн организма кашни кун кирлĕ хутăшсенчен тăрать: А провитамин, Е витамин, организма вăй-хăват паракан Q 10 кофермент, Омега-3, Омега-6 питĕ кирлĕ çу кислотисем, аминокислотасем, биофлавонидсем, микроэлементсем (кальци, магни, йод, пăхăр, цинк, селен, тимĕр... – 150 ытла пай). Çĕпĕрпе Уралта пурăнакансем те, хăйсем авалтанпах пылпа, кедр мăйăрĕпе, йĕтĕн, сырлан, кедр çăвĕсемпе – сиплĕ продуктсемпе – апатланса пурăнаççĕ пулин те çак çăва сывлăхлă апатлану продукчĕ тесе кăмăлласах йышăнчĕç.

Кăнтăр çĕр-шывĕсенче ӳсекен улма-çырла (лимон, апельсин, банан...) пирĕн сĕтел çинче çирĕп вырăн йышăннă пекех «Злата пальма» çу та Уралпа Çĕпĕр тăрăхĕсенче пурăнакансен кăна мар, Атăл тăрăхĕнче пурăнакансен шанчăкĕ пулса тăчĕ. Хăйсен сывлăхĕ лайăх енне улшăннăран çак çăва апата кĕртнĕ çынсем хăйсен тăванĕсемпе тус-юлташĕсене те ăнах сĕнеççĕ. Медицина та çак продукт çине тимлĕх уйăрма пуçларĕ. Подольскри клиника тĕпчевĕсем тăрăх Раççейри Наукăсен академийĕ «Злата пальма» çу нумай чир-чĕре асăрхаттарассипе, аталанма чарассипе эффективлă тесе йышăнчĕ, сертификат та пачĕ.

«Злата пальма» çу çак чирсене хирĕç кĕрешме тата сиплеме пулăшать: атеросклероз, миокард инфаркчĕ, инсульт, стенокарди. Сахăр диабечĕн, ăна пула аталанакан чирсен профилактики тата сиплевĕ пулса тăрать. Япăх холестерина кăларать, юнри сахăр шайне йĕркелет. Карланкăн, ӳпкен, кăкăр парĕн, хырăмлăхăн, тӳрĕ пыршăн усал шыççи аталанасран сыхлать. Пайăрка тата химиотерапи хыççăн пулăшать. Ӳт чирĕсем, артрозоартрит вăхăтĕнче, ача кĕтнĕ вăхăтра усăллă. Вăл хырăмри пепкене тĕрĕс аталанма, ачасене ӳсме кирлĕ. Хырăмлăхпа вун ик пумăклă пыршă язвин, гастрит профилактикипе сиплевĕ те пулса тăрать. Ӳте вăхăтсăр ваталасран хӳтĕлет. Куç чирĕсем чухне те çак çăва апата хушни усăллă. «Злата пальма» çу иммун тытăмне çирĕпелтет, ас тавăма лайăхлатать, организм ватăлассине вăрахлатать.

Çитĕннисене – апатчен пĕрер апат кашăкĕ, ачасене пĕрер чей кашăкĕ ĕçме сĕнеççĕ. Çăва апата (салата) яма е апат хыççăн тӳрех ĕçме те юрать. Çури мĕн пур усăллă япала апата кирек мĕнле майпа, кирек мĕнле температурăра хатĕрлесен те упранса юлать.

«Пĕтĕм апатлану тĕнчи» (WORLD FOOD 2003) пĕтĕм тĕнчери куравра «Злата пальма» çу ытти апат çăвĕсем хушшинче ГРАН–ПРИе тивĕçнĕ, ытти тĕрлĕ наградăсем чылай, апат продукчĕсен куравĕсен тата «Медицина: паян – ыран» куравăн медалĕсене те çĕнсе илнĕ. Тĕпчев витĕр тухнă хыççăн çăва Раççей тата ют çĕршывсен сертификат системисем ырланă.

«Злата пальма» çăва Шупашкарта туянма пулать:

октябрĕн 1-мĕшĕччен: Миттов бульварĕ, 14 çурт, 1 корп., «Глобус» суту-илӳ çурчĕ («Чернышевский урамĕ» чарăну);

октябрĕн 1-мĕшĕ хыççăн: Ломоносов урамĕ, 2 çурт. («Роща» остановкăран 17, 14 №№ троллейбуссемпе, чукун çул вокзалĕ патĕнчен – 11 № троллейбуспа).

**Кашни эрне кун консультантсем 10 сехетре Муркаш пасарĕ тĕлне килеççĕ. Ыйтса пĕлмелли тел.: 89278504655, 89278566452.**

18 çул тултарнă консультантсемпе менеджерсене пирĕнпе ĕçлеме чĕнетпĕр.


# Турбо-Интернет от компании «МегаФон»: полетаем!..




«Глянь-ка в Интернете погоду», «Скачай мне вчерашний матч, а то не успел посмотреть», «Говорят, в Сети все новые серии «Папиных дочек» выложили…»

С каждым днем Интернет становится все привычнее и доступнее. Компьютер или ноутбук сегодня стали такими же «домашними любимцами», как телевизор, который они грозят полностью вытеснить. Тем более что на телеэкране мы видим то, что нам показывают, а на мониторе – то, что мы хотим посмотреть.

Единственное, что может омрачить удовольствие от пользования Интернетом, – низкая скорость доступа. Завис наполовину скачанный фильм, не отправилось письмо, пропало сообщение… Представьте себе уныло буксующую на дороге «легковушку», мимо которой со свистом пролетают гоночные автомобили. Выход прост: установите на своем компьютере турбоскоростной Интернет от компании «МегаФон».

Скачивать фильм не восемь часов, а сорок минут, мгновенно открывать фотографии и загружать страницы сайтов за 2 секунды – это совершенно новое ощущение от Сети. Турбо-Интернет от МегаФона сэкономит время и расширит ваши возможности: скорость доступа **до 7,2 Мб/сек** позволит за полчаса скачать новый альбом любимой группы, выложить снимки на своей страничке в «Одноклассниках», пообщаться на форумах.

При этом для подключения вам не нужно вызывать бригаду установщиков, ждать их дома, не отлучаясь, а потом опутывать квартиру проводами, тянущимися на лестничную площадку. Турбо-Интернет работает на беспроводном «МегаФон-модеме», размером чуть больше флешки: легким движением вы подключаете его к компьютеру или ноутбуку, после чего он автоматически устанавливает программу «МегаФон-Интернет». Следуйте ее подсказкам – и она самостоятельно настроит модем и компьютер для работы в Сети. С таким подключением справится даже ребенок.

Сколько же стоит это удовольствие? ***Один рубль.*** Акцию «Модем за 1 рубль» компания «МегаФон» проводит до 30 сентября, чтобы школьники и их родители не тратились на подключение дорогостоящего проводного Интернета. Теперь все жители Чувашии смогут воспользоваться этим предложением: модем со скоростью **до 3,6 Мбит/сек** стоимостью **1 рубль** плюс **3 месяца безлимитного Интернета**.

Любителям еще более высоких мощностей предлагается модем со скоростью **до 7,2 Мбит/сек** стоимостью **399 рублей** плюс **2 месяца безлимитного Интернета**.

В чем тут подвох, спросите вы. А подвоха нет, все по-честному: высокие скорости, Интернет без конца и без краю, модем за символическую цену. Самое время «полетать»!


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории:**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:170203:66, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:170203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.;**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:170203:68, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:170203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории:**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1105, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6700 кв. м.;**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1109, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6101 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**






## Тав тăватпăр

Аннене, кукамая, тăванăмăра – Атапай ялĕнче пурăннă Тамара Андреевна Степановăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Атапайри шкул коллективне, тăвансене, хурăнташсене, юлташĕсене, ял-йыша, кӳршĕсене чунчĕререн тав тăватпăр.

**Ковалевсен, Шараповсен çемйисем.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**24 сентября с 8-00 до 16-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Белорусской фабрик и других российских производителей. 1-5.**






* * *

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитный, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, торф. Доставка. Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 7-8.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.**

* * *

**Калайкасси ялĕнче çăм арманĕ октябрĕн 1-мĕшĕнчен ĕçлеме пуçлать. Кану кунĕсĕр ирхи 7 сехетрен.**
**Тел.: 65-2-33, 8-960-311-55-72.**

* * *

**Продаю трактор МТЗ-82.1 1990 года выпуска, большая кабина, с погрузчиком ПКУ-0,8.**
**Тел.: 8-961-340-55-68.**

* * *

**СХПК «Герой» Моргаушского района ЧР приглашает на постоянную работу газоэлектросварщика, главного зоотехника. Оплата достойная.**
**Тел.: 67-5-49, 67-5-48, 8-927-864-31-33. 2-2.**

* * *

**Утерянный аттестат № АА 0004998, выданный МОУ «Мамышская СОШ» в 2007 году на имя Хораськиной Марины Юрьевны, считать недействительным.**

* * *

**Продаю дом с надворными постройками в с. Моргауши. Тел.: 8-908-305-51-28. 1-2.**

* * *

**Продаю керамзитобетонные блоки, цемент с доставкой. Дешево и качественно. Тел.: 8-908-305-51-28. 1-2.**

* * *

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельный долей единого земельного массива, расположенного на территории бывшего СХПК им. К. Иванова Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ единого земельного массива состоящего из тринадцати земельных долей общей площадью 163800 кв. м., расположенного по адресу: ЧР, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, в центральной части кадастрового квартала 21:17:230701.

Заказчик работ, собственник в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Степанов Анатолий Александрович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Шупоси, паспорт серии 9702 № 628182 выдан 25.12.2002 г. Моргаушским РОВД Чувашской Республики.

Согласование местоположения границ состоится 22 октября 2010 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности необходимо направлять по почтовому адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

Я, собственник земельной доли Степанов Анатолий Александрович, объявляю о выделении земельного участка общей площадью 16,38 га, расположенного на территории землепользования СХПК им. К. Иванова Моргаушского района Чувашской Республики в центральной части кадастрового квартала 21:17:230701.

Претензии принимаются в течение месяца в администрации Сятракасинского сельского поселения.

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:180102:63, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Костеряки, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:180102, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5800 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1104, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5998 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:101102:9, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Адабай, ул. Новая, д. 4, для индивидуального жилищного строительства, площадью 4342 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**

**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**

**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**

**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.**
**Пичете панă 21.09.2010 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4017.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.